Сывă пурнăç йĕркишĕн

# Район пуçлăхĕн кубокĕсене çĕнсе илессишĕн

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Е.А. Андреев парнисене çĕнсе илессишĕн иртекен ăмăртăва пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан шкулсем, ял хуçалăх предприятийĕсемпе организацисен тата учреждениsen пĕрлештернĕ командисем хутшăнчĕç. Хĕрÿ кĕрешÿре “Волга” ООО команди пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Хаклă парнене тата куçса çÿрекен кубока тивĕçрĕ. Иккĕмĕшсем Туçи Марисем пулчĕç. Шалти ĕçсен пайĕ виççĕмĕш вырăна тухрĕ.



Çĕнтерÿçĕсене кубоксемпе, хаклă парнесемпе чысларĕç.

Вăтам пĕлÿ паракан шкулсем хушшинчи ăмăртура Калайкассисем çĕнтерÿçĕсем пулчĕç. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăна Ярапайкассисемпе Туçи Марисем пайларĕç.Пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан шкулсем хушшинчи ăмăртура чи маттуррисем Сыпайсем пулчĕç. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене Очăкассисемпе Шомиксем пайларĕç.

Уйрăм çынсем хушшинчи тупăшура Сыпайри пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан шкулти Джамилия Баранова пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Арçын ачасем хушшинче Очăкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан шкулти Иван Михайлов, 1990-1991 çулсенче çуралнă аслă çулхи хĕрсен ăмăртăвĕнче Ярапайкасси шкулĕнчи Гузель Антонова пĕрремĕш вырăна тухрĕç. Яшсенчен Çатракасси шкулĕнчи Павел Охотников палăрчĕ. 1992-1993 çулсенче çуралнă вăтам çулхи яшсем хушшинчи ăмăртура Калайкасси шкулĕнчи Евгений Родионов пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Хĕрсен тупăшăвĕнче Ярапайкасси шкулĕнчи Настя Костина çĕнтерÿçĕ пулчĕ. Ял хуçалăх предприятийĕсемпе организацийĕсем (хĕрарăмсем) хушшинчи ăмăртура пĕрремĕш вырăна “Волга” ООО командăри Альбина Дашкова тухрĕ. Арçынсен ăмăртăвĕнче те пĕрремĕш вырăна асăннă командăри Александр Корнеев тухрĕ. Çĕнтерÿçĕсем хаклă парнесемпе дипломсене тивĕçрĕç.



«Расна» ушкăн савăк кăмăл парнелерĕ.

50 çултан аслăрах хĕрарăмсем хушшинчи ăмăртура Чуманкасси ял тăрăхне кĕрекен Галина Иванова чи маттурри пулчĕ. Арçынсем хушшинче Туçи Мари районĕнчи Софроний Андропов палăрчĕ. Хĕрĕх çултан аслăраххисем хушшинчи ăмăртура Ильинка ял тăрăхĕнчи Н. Леденцова пулчĕ. Арçынсем хушшинче Туçи Мари районĕнчи А. Моляров палăрчĕ.



Е.Андреев кубокĕ – «Волга» хуçалăхра.

Е. Андреев хĕрĕ Валентина Евтихеевна ăмăртупа питĕ кăмăллă пулчĕ. “Çакăн пек ăмăрту çирĕм саккăрмĕш хут иртет. Чи малтан вара ăна Валерий Иванович Вязов тăрăшнипе ирттерме пуçланă. Атте вăл вăхăтра чĕрĕ, сывă пулнă. Кăçал вăл çуралнăранпа тăхăрвун пилĕк çул çитет. Эпир паян çакăнта хамăр тăвансемпе çитрĕмĕр. Максимпа Вадим мăнуксем те спорта питĕ кăмăллаççĕ. Аттене хисеплесе çакăн пек массăллă ăмăрту иртнĕшĕн эпир савăнатпăр, мухтанатпăр. Ăна сума суни пирĕншĕн пысăк чыс. Кăçалхи çул, ытти çулхисемпе танлаштарсан, ăмăртăва ытларах хутшăнчĕç. Эпĕ ăмăрту çакăн пек шайра иртнишĕн чи малтан район пуçлăхне тав сăмахĕ калатăп”, – терĕ Валентина Евтихеевна.

Район пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн 66 команда хутшăнчĕ. Пĕтĕмĕшле 300 çын ытла йĕлтĕр йĕрĕ çине тăчĕ.



Район пуçлăхĕнчен парне илме кăмăллă çамрăк спортсменкăна.

Пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан шкулсенчи учительсен 23 команди ăмăртрĕ. Пĕрремĕш вырăна Çатракасси шкулĕ тивĕçрĕ. Вĕсене телевизор парса чысларĕç. Иккĕмĕшсем Калайкассисем пулчĕç. Виççĕмĕш вырăна вара Муркаш шкулĕ тухрĕ.

Ял тăрăхĕсен тата район администрацийĕн пайĕсен ăмăртăвне 20 команда хутшăнчĕ. Пĕрремĕш вырăна шалти ĕçсен пайĕ тухрĕ. Телевизора тивĕçрĕç вĕсем. Иккĕмĕшсем Муркаш ял тăрăхĕсем пулчĕç. Виççĕмĕш вырăна вара Катькас ял тăрăхĕ тухрĕ.

Ял хуçалăх предприятийĕсем, организацисемпе учреждениsem хушшинчи ăмăртăва 23 команда хутшăнчĕ. Пĕрремĕш вырăна “Моргаушрайбыт” ООО команди тивĕçрĕ. Телевизор парнелесе чысларĕç вĕсене. Иккĕмĕш тата виççĕмĕш вырăнсене “Волга-I” ООО, “Волга-II” ООО командисем пайларĕç. Палăртма кăмăллă, чи массăллă хутшăнакансем Ильинка ял тăрăхĕсем пулчĕç.

Ертÿçĕсем хăйсем те уйрăм дистанцире вăй виçрĕç. VIP – чупăва вăтăр йĕлтĕрçĕ хутшăнчĕ. Финиша “Моргаушрайбыт” ООО ертÿçи А.П. Давыдов пĕрремĕш çитрĕ. Иккĕмĕш вырăна Сосновка шкулĕн директорĕ О.А. Максимов тивĕçрĕ. Виççĕмĕшĕ “Лидер” ООО тĕп инженерĕ В.В. Михайлов пулчĕ. Ку ăмăртăва район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов та хутшăнчĕ, активлисенчен пĕри пулчĕ. Хĕрарăмсем хушшинче пĕрремĕш вырăна Очăкасси шкулĕн завучĕ Т.Н. Мясникова тивĕçрĕ. Иккĕмĕшĕ Калайкасси шкулĕн директорĕ И.В. Осипова пулчĕ. Виççĕмĕш вырăна Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Л.Г. Ковалева тухрĕ.

Ветерансем те ăмăртăва активлă хутшăнчĕç, вĕсенчен чи асли А.В. Васильев пулчĕ. Вăл Чуманкасси шкулĕнче тренер пулса вăй хурать. Çавăн пекех В. Соколова спортсменкăн тренерĕ те вăлах пулнă. Чи кĕçĕнни вара И. Портнова пулчĕ.

Çĕнтерÿçĕ-командăсем район пуçлăхĕн кубокĕсене тивĕçрĕç. Призерсем çавăн пекех хаклă парнесене, дипломсене илме пултарчĕç. Çакна та палăртмалла. Чылай предприятисем, уйрăм педпринимательсем, уйрăм çынсем хăйсем те ку е вăл номинаципе пама парнесем чылай илсе килнĕ. Пĕтĕмĕшле уяв савăнăçлă иртрĕ.

Çав кун сцена çинче хавас юрă-кĕвĕ чылай янăрарĕ. Муркашри “Расна” ушкăн пухăннисене хăйĕн пултарулăхĕпе савăнтарчĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

## Йыхрав

Мартăн 24-25-мĕшĕсенче ĕç çыннисен спартакиади шучĕпе Спорт çуртĕнче арçын командисем хушшинче волейбол енĕпе Муркаш районĕн чемпионачĕ пулать. 10 сехетре пуçланать.

Унта районти предприятисемпе организацисен тата учреждениsen физкультура коллективĕсен пĕрлештернĕ командисем хутшăнаççĕ.

Çĕнтерÿçĕсене чи нумай очко пухнă тăрăх палăртаççĕ. Командăра 9 участникпа 1 представитель пулмалла.

Пĕрремĕш вырăн йышăннă командăна диплом, куçса çÿрекен кубок параççĕ, иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăн йышăннисене – дипломсем.

## 01 пĕлтерет

# Çынни паллă мар

Пĕчĕк пушар пулмасть. Вăл кирек хăçан та пысăк хăрушлăхпа çыхăннă: ирĕке кайнă вут-кăварта вуншар çул пухнă пурлăх çеç мар, выльăх-чĕрлĕх те кĕлленет, çын пурнăçĕ те вăхăтсăр татăлать. Çакна çирĕплетекен юлашки тĕслĕх. Мартăн 11-мĕшĕнче пушар хуралне килнĕ чĕнÿпе ирхи виçĕ сехет иртсен Мăн Шашкар енне тухма тиврĕ. Пĕчĕк пушар пулмасть тени кунта шăп та лăп вырăнлă сăмах. “Хĕрлĕ автан” ку хутĕнче туристсен “Волжский эксклюзив” базинчи хуралçăсен çуллахи будкине иленнĕ. Çав каç кунта хуралта пулнă Ю.Кольцов каласа панă тăрăх вăл хĕллехи çурта канма кĕнĕ чух çав будка çинче çăра çакăнса тăнă. Виçĕ сехет тĕлĕнче урама тухсан хуралçă будкăра пушар алхаснине асăрхать, телефонпа пулăшу чĕнет, хăй çулăма сÿнтерме пуçлать, анчах патне пырсан унта çăра çуккине асăрхать. Çăлавçăсем çитсе пушара сÿнтерсен, будкăра çунса кăмрăкланнă çын виллине тупаççĕ. Çире юлнă тумтир пайĕсем тăрăх ку çын çак тăрăхра çынсене пулăшса пурăннă Олег пулнине уйăрса илеççĕ. Пушар Олег вырăн çинче пирус туртса выртнинчен тухнисĕр пуçне арçын хушамачĕ те, ашшĕ ячĕ те, вăл ăçта çуралса ÿсни те паллă мар. Арçын вăтамран 40 çулсенче.

**И. СМИРНОВ,**
**районти патшалăх пушар надзор пайĕн ертÿçи.**

## Пĕлтерÿсем. Объявления

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии следующих свободных земельных участков к распределению на праве собственности, для ведения огородничества из категории земли населенных пунктов, расположенных на территории Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики

| № п-п | Месторасположение земельного участка | Кадастровый номер участка | Целевое назначение | Площадь кв. м. |
|---|---|---|---|---|
| 1. | Участок находится примерно в 120 метрах по направлению на юго-запад от ориентира жилое строение, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, выс. Коминтерн, ул. Коминтерна, д. 8. | 21:17:08 08 01:0029 | Для ведения огородничества | 1192 |

Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6 (здание администрации), кабинет № 312 и 313, с 8-00 до 17-00 час. Ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии следующих свободных земельных участков к распределению на правах аренды, для организации базы отдыха, добыче, хранения, переработки и реализации рыбной продукции, из земель промышленности, энергетики, транспорта, связи, радиовещания, телевидения, информатики, земли для обеспечения космической деятельности, земли обороны, безопасности и земли иного специального назначения, расположенных на территории Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики

| № п-п | Месторасположение земельного участка | Кадастровый номер участка | Целевое назначение | Площадь кв. м. |
|---|---|---|---|---|
| 1. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Чураккасы, Шешкарский залив. | 21:17:03 01 01:0098 | Для организации базы отдыха, добыче, хранения, переработки и реализации рыбной продукции | 2686 |
| 2. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Чураккасы, Шешкарский залив. | 21:17:03 01 01:0099 | Для организации базы отдыха, добыче, хранения, переработки и реализации рыбной продукции | 47 |

Заявления принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 до 17-00 час. Ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

**Приглашаем принять долевое участие в строительстве 36-иквартирного жилого дома в д. Москакасы Моргаушского района ЧР.**
**Стоимость 1 кв. м. жилой площади – 17800 руб.**
**Обращаться в ЗАО «МСО «Моргаушская» по адресу: 429551, ЧР, Моргаушский р-н, д. Юнгапоси.**
**Тел.: 32-2-23, 2-21-29, 2-21-19. 2-3.**

**РАЙОН ÇЫННИСЕНЕ ПĔЛСЕ ТĂМА**

**«Чувашсетьгаз» предприятийĕн «Моргаушимежрайгаз» филиалĕ тепĕр хут асăрхаттарать. Çурхи шыв-шур вăхăтĕнче газ пăрăхĕсем сиенленме, шăтма тата сыпăкĕсем уйрăлса кайма пултараççĕ. Çапла вара газ сăрхăнса тăрса подвалсене е ытти тĕрлĕ пÿлĕмсене тулма пултарать. Газ шăршине сиссен тÿрех райгаза 04 е 60-2-24 телефонсемпе шăнкăравласа пĕлтерме ыйтатпăр. Газ сечĕсем пăсăлнине асăрхасан кун пирки хыпарлас пулать.**

**Райгазри авари служби çитиччен çав çуртран тÿрех пурин те урама тухмалла. Çывăхра шăрпăк е электричество çути çутма, пирус туртма юрамасть.**

**К СВЕДЕНИЮ НАСЕЛЕНИЯ РАЙОНА**

**В связи с производственной необходимостью и расширением номерной емкости на Орининской АТС изменены номера телефонов:**

**2-18-23 ОАО «Моргаушскагропромхимия» на 60-2-41**
**2-14-12 СХПК «Оринино» на 60-2-40**
**2-23-81 Хлебопекарня на 60-2-37**
**2-17-33 Директор ф-ла «Моргауширайгаз» на 60-2-27**
**2-14-82 ПТО «Моргауширайгаз» на 60-2-25**
**2-10-04 Диспетчер «Моргауширайгаз» на 60-2-24**
**2-22-85 Приемная дир. «Моргауширайгаз» на 60-2-28**
**2-17-39 Главый инженер, главный бухгалтер «Моргауширайгаз» на 60-2-26**
**2-25-86 ООО «Энергосервис» на 60-2-39**
**2-25-38 Орининская СОШ на 60-2-38**
**2-16-23 Глава сельского поселения на 60-2-36**

**Сведения об изменении квартирных телефонов можно узнать по номеру справочной службы 09.**

**Моргаушский РУЭС.**

**Апрель вĕçĕнче пăрулامалли хĕрлĕ тĕслĕ ĕне сутатăп.**
**Тел.: 2-24-12.**

**ЗАО «Агро-Урожай» Моргаушского района продает поросят населению по цене 150 руб. за 1 кг. живого веса. Адрес: д. Большие Шептаки.**
**Телефон для справок: 2-18-10.**

**Тимĕртен тунă лаша урапи сутатăп. Кустăрмисем - çăмăл машинăн.**
**Тел.: 8-927-868-28-20.**

**Спутниковое телевидение, от 4 тыс. рублей, с установкой. Гарантия.**
**Тел.: 8-906-385-29-30.**
**1-6.**

**Продаем цемент М-400 50 кг, шифер семиволновый, восьмиволновый, плоский, рубероид 15 метровый. Обращаться: с. Моргауши, магазин «Рука мастера».**
**Тел.: 8-903-346-40-58.**
**1-5.**

**Продаю лесопиломатериал. Марий Эл. Документы, чеки предоставляем.**
**Тел.: 8-905-379-01-02.**
**8-10.**

ГУП ЧР “Моргаушский издательский дом”
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.
Директор-главный редактор
А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3552.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 20.03.2007 г.
Заказ
Дежурный по номеру ИЛЛАРИОНОВА Р.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП ”ИПК ”Чувашия”: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.